24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941 ОКТЯБРЬ 15 ЮНКУН 243 (5958) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери ученăйсем—гитлеризма хирĕç кĕрешме çĕкленĕр!

Ученăйсен фашизма хирĕçле Мускаври митингĕ

Октябрĕн 12-мĕшĕнче Мускавра ученăйсен фашизма хирĕçле митингĕ пулса иртнĕ. Совет интеллигенцийĕн представителĕсем Союзсен Çурчĕн Колонăй залĕнче пухăннă. Кунта ватă тата çамрăк ученăйсем пухăннă. Гитлеризма хирĕç ăна татăклăн çĕнтериччеех кĕрешме пулса, вĕсем пĕтĕм тĕнче умĕнче тыслăн тупа тунă, нимĕçсен фашистла варварĕсене—наукăпа культурăна çĕмĕрсе аркатаканскне татăклă отпор пама вĕсем пĕтĕм тĕнчери ученăйсене чĕннĕ.

Митинга академик **Державин** уçнă. Вăл хĕрӳллĕ сăмах калать. Ун хыççăн СССР Наукăсен Академин президенчĕн **Комаров** академикăн телеграммине вуласа панă, вăл хăйĕн сывлăхне пула митингра пулайман. Унăн телеграммине митингра пулнисем тăвăллăн алă çупса йышăннă. Митингра академик **Капица**, академик **Ферсман**, СССР Наукăсен Академин член-корреспонденчĕ **Бахрушин** тухса калать. Вĕсем хыççăн СССР Наукăсен Академи Президиумĕн членĕн **Бах** академикăн телеграммине вуласа панă, вăл та хăйĕн сывлăхне пула митингра пулайман. Малалла академик **Фрумкин**, профессор **А. К. Тимирязев, академик Готье,** СССР Наукăсен Академин Туркменири филиалĕн председателĕ академик **Келлер,** Германири ученăй-антифашист, Берлинри университетăн профессорĕ **Кронфельд** тухса сăмахсем калать.

Ораторсен фашистла çынçиенсене хирĕç пĕр шеллемесĕр кĕрешме чĕнекен патриотла хĕрӳллĕ сăмахĕсене митингра пулнисем вăйлăн алă çупса кĕтсе илнĕ.

Митингра Англипе Америкăри наукăпа культурăн палламăлă деятелĕсен саламлă телеграммисене вуласа панă. Фашистла ирсĕрсене хирĕç кĕрешес ĕçре пĕтĕм тĕнчери интеллигенци тăванла пĕр шухăшлă пулнине кăтартакан çав сăмахсене митинг участникĕсем хавасланă кĕтсе илеççĕ.

Пĕтĕм тĕнчери ученăйсене чĕнсе калаанине митинг пысăк çĕкленӳпе йышăнать. (ТАСС).

Пĕтĕм тĕнчери ученăйсем!

Эпир, ССР Союзĕнчи ученăйсем, фашизма хирĕçле Мускаври митинга пухăннăскерсем, пĕтĕм тĕнчери ученăйсене, интеллигенцине хăварăн вăй-хăвата гитлеризма хирĕç—культурăпа наукăн чи тискер тăшманне хирĕç кĕрешмешкĕн пĕтĕçтерме чĕнетпĕр.

Пирĕн çĕршыв фашизма хирĕç туса пыракан пĕтĕмĕшле кĕрешĕве хутшăнса, эпир пирĕн пата сĕкĕнсе кĕнĕ варварсене, Чингисханпа Аттилăн тапăнăвĕсенчен те тискеррĕн тата ирсĕррĕн пусмăрласа мăшкăллакан варварсене хăвăртрах хăваласа кăларма хамăртан мĕн килнине пурне те тăвас кăмăлпа çеç мар хавхаланса пыратпăр; çав кĕрешĕве хутшăнса эпир халăхсен демократиллĕ пурнăçĕшĕн, вĕсен наукипе культурине хăратса тăракан фашизма хирĕç пĕтĕм тĕнчери кĕрешĕве пулăшнине те куратпăр.

Фашизм пĕтĕм тĕнчене хăратса тăрать. Фашизм халăхсен ирĕклĕхне, цивилизацие, наука ирĕклĕн аталанса пырассине пĕтерсе хума ĕмĕтленет. Гитлерла вандалсем хăйсем оккупацилеменĕ çĕршывсенче наука центрĕсене çĕмĕрсе тăкрĕç. Чехире, Норвегире, Голландире, Бельгире, Югославире, Грецире, Польшăра университетсемпе шкулсене хупнă. Фашистла реакци Францири наукăна пĕтерсе лартрĕ.

Фашизм наукăна вараласа ирсĕрлетрĕ. Интеллектăн духовнăй вăйĕ вырăнне гитлерла варварсем вăйпа ирĕксĕрлессин, тĕттĕмлĕхĕн, ирсĕр инстинктсен культне чĕртсе тăратрĕç. Биологи вырăнне—пурнăç законĕсем çинчен калакан аслă наука вырăнне—фашистсем этеме курăмасăр тарăхса пурăнма вĕрентекен «раса теорине» туса хучĕç, çав «теорин» тĕллевĕ — пĕтĕм тĕнчере пуç пулса тăма фашистсен право пурринне çирĕплетсе парасси пулса тăрать.

Этемлĕхри çыхăнусемшĕн, çынсене пĕр-пĕрне тĕрлĕ çĕршывсемпе тата халăхсемпе паллаштарассишĕн ĕçленĕ наукăсене—географие, этнографие, историе,—фашизм «геополитика» тесе скерпе улăштарнă. Çав «геополитикăн» пĕртен-пĕр задачи—гитлерла Германин ютçĕршывсене вăрă-хурахла тытса илес тата ытти халăхсене чура туса хурас правине çирĕплетсе парасси пулса тăрать.

Халăхсем ăс-хакăл тĕлĕшĕнчен чăнипех чеченленсе пынине кăтартса паракан гуманизм вырăнне фашизм ĕмĕр-ĕмĕр вăрçă пымалли йĕрке туса хучĕ, «раса ĕрчетессине», стерилизаци тăвассине, вăй-халсăр, ватă та чирлĕ çынсене массăллăн вĕлерсе пырассине тата ытти çавăн пек тискерлĕхпе ирсĕрлĕхĕн принципĕсене туртса кăларчĕ. Пирĕншĕн чи паха та хаклă культурăпа наукăпа—фашизм вилĕмле тăшман пулса тăрать.

Пĕтĕм тĕнчери ученăйсем çутçанталăка çĕнтерсе илес тĕлĕшпе пĕр-пĕрин, пе таччăн çыхăнса ĕçленĕ çĕрте пуринчен ытларах этемлĕхĕн культурине тата ырă пурнăçне хăпартасси çинчен шухăшланă. Анчах та фашизм кучухнехи наукăпа техникăн аслăран та аслă çитĕнĕвĕсемпе арканас, пĕтерес, ишĕлтерес ĕçре усă курать.

Жуковский, Прендтль, Рейнольдс, Тэйлор, Карман тата ытти ученăйсем хăйсен аэродинамика енĕпе тунă ĕçĕсенче аэроплан вĕçнине ăнланма кирлĕ теорисене аталантарса пынă. Çав ĕçсем кучухнехи самолета туса хатĕрлеме май пачĕç. Самолет этемлĕх аллине пĕр-пĕринпе çыхăнса хутшăнмалли чи хăватлă хĕçпăтал пулса тăчĕ, **çавна пула** пуш-хирсемпе океансем тата çĕр талкишĕсем урлă çул уçăлчĕ. Анчах та Германи фашисчĕсем çав паха самолетпа Лондонри, Ленинградри, Мускаври, Белградри, Роттердамри ĕмĕртен туса пынă культурăллă пуянлăхсене аркатнă çĕрте, мирлĕ пурăнакан çынсене вĕлернĕ çĕрте усă курчăр тесе мар пĕтĕм пултарулăха хурса ĕçленĕ çав аслă ученăйсемпе инженерсем.

Этемлĕхĕн ырă пурнăçĕшĕн ĕçлеме тивĕçлĕ япаласене фашистсем çинсене вĕлермелли тата чура туса хумалли чукмарсемпе хĕçпăшалсем туса хучĕç.

Пирĕн çинче—ученăйсем çинче—çакăн пек парăм тăрать: урса кайнă фашистсем наукăпа техникăн çитĕнĕвĕсемпе хăйсен тискер ĕçĕсенче усă курнине хирĕç тăмаллин майсем шыраса тупмалла пирĕн, çакна тăвассишĕн эпир моралльĕ ответлăх тытатпăр.

Çав ответлăха ăнланса илсе, эпир, совет ученăйĕсем, гитлерла кĕтӳсене хăвăртрах çапса аркатассишĕн, тĕнчене инкек кӳрекен фашистла хура-хăмăр чумана тĕппипех пĕтерсе тăкассишĕн хамăран мĕнпур пĕлӳлĕхпе тимлĕхе паратпăр.

Анчах эпир пĕлетпĕр, ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсем, тĕнчери мĕнпур малта пыракан çынсем пĕр-пĕринпе таччăн çыхăнса, кар тăрса активлăн кĕрешсен кăна фашизма çапса çĕмĕрме пулать.

Истори халиччен курман чи хăрушă тиранне хирĕç—гитлеризма хирĕç пыракан кĕрешĕве пирĕн, мĕнпур çĕршывсенчи ученăйсен, хамăран пĕтĕм вăйсемпе пĕлӳсене памалла.

Пирĕн наукăри ĕç хамăр çĕршыври халăхсен аталанăвĕпе тата халăхсем ыйтнипе яланах таччăн çыхăнса пынă, халăхсем ыйтни мĕнпур этемлĕх интересĕсемпе килĕшсе тăнă. Çĕршывăн çутçанталăк паракан пуянлăхĕсене тупас тата вĕсемпе усă курас ĕçре, хуçалăха аталантарса пырас ĕçре совет ученăйĕсем халăха вăйлăн пулăшса пынă. Хамăран хуçалăха план тăрăх аталантарса пыни икĕ вунăçуллăх хушшинче шултăра промышленноçпа çĕнетнĕ ялхуçалăхне туса çитерме май пачĕ, çакă вăл пĕтĕм совет халăхĕн пурнăç виçине çĕклерĕ.

ССР Союзĕнчи мĕнпур национальноçсем пĕр-пĕринпе таччăн çыхăнса ĕçленипе пирĕн çĕршыв ӳссе тĕрекленчĕ. Пирĕн Конституци тăрăх Союза кĕрекен нумай тĕрлĕ национальноçсем аслă çовет çемьинче пĕртан правăллă тата пĕр пек хисеплĕ, шутланакан членсем пулса тăраççĕ.

Пирĕн ученăйсем Совет Союзне кĕрекен пур халăхсен историне те тĕпчесе вĕренеççĕ, вĕсен фольклорне тĕпчесе вĕренеççĕ, вĕсен нацилле культурине ӳсме пулăшаççĕ. Çак ĕç ССР Союзĕнчи халăхсене пĕртан правăллă халăхсен, пĕр-пĕрне хисеплекен тата пĕр-пĕрин культурине хаклакан халăхсен союзне пĕтĕçсе тăма пулăшĕ. Пирĕн пысăк йышлă, нумай нацилле Хĕрлĕ Çар пĕр шухăш-камăллă пулса фашистсем тапăнса кĕнине хирĕç хăватлă отпор пани пирĕн тăван çĕршыври халăхсен çемьи нихçан иксĕлми çирĕп пĕтĕçсе тăнине çавтери витĕмлĕн кăтартса парать.

Фашизма пуçĕпех çĕнтересшĕн, фашизма пĕтерсе тăкассине эпир, совет ученăйĕсем, шанса тăратпăр. Мĕнпур çĕршывсем пĕр-пĕринпе мирлĕн çыхăнса ĕçлеме кирлĕ условисенчен пĕри вăл—халăхсем пĕр-пĕрне тан хурса пĕр-пĕрне ăнланни тата хисеплени, пĕр-пĕрин культурине тата кашни уйрăм çĕршывăн экономикăллă ыйтусене вĕренсе, курса пыни, мĕнпур тĕнче ученăйсем пĕр-пĕринпе таччăн çыхăнса тăни, вĕсен мĕнпур этемлĕх ырлăх кӳрессишĕн тăрăшакан вăйĕсене пĕрлештерсе пĕтĕçтерни пулса тăрать.

Гитлерла вăрçă машини киле-киле çапнин мĕнпур йывăрлăхне совет халăхĕн хăй çинче тӳссе иртерме лекнĕ хунсенче, совет халăхĕн хулисене арканса пынă хунсенче, совет çыннисене фашистла ирсĕрсем çаратса, тискеррĕн мăшкăлласа, пусмăрласа, ирсĕрлесе пынă хунсенче, фашизм хăратса тăракан ССР Союзĕнчи, Англири, США-ри халăхсем ирĕклĕ пулассипе ирĕклĕ пулас марри çинчен, Францири тата фашистсем пусмăрланă ытти çĕршывсенчи халăхсем ирĕклĕ пулассипе ирĕклĕ пулас марри çинчен тăракан ытту гигантла фронтăн хаяр çапăçăвĕсенче татăлса пынă хунсенче эпир мĕнпур тĕнчери ученăйсене чĕнсе калатпăр.

Кĕрешĕве активлăн хутшăнасси тата Гитлерăн халăхсене пĕрерĕн-пĕрерĕн тапăнса чуралăха кĕртсе ӳкермелли планне тĕппипех арканса ăма пулăшасси мĕнпур культурăпа наука деятелĕсен тивĕçлĕхĕ пулса тăрать.

Çапăçу хирĕсенче халĕ халăхсен никама пăхăнманлăхĕ пирки, ирĕклĕхĕ пирки, халăхсен пурнăçĕ пирки ĕç татăлать. Наука варварствăна çĕнтерĕ-и, тĕнчери прогресс гитлерла реакцие çĕнтерĕ-и,—халĕ çакăн пирки ĕç татăлать.

Гитлеризма яланлăхах пĕтерсе тăкма тата мĕнпур çĕршывсенчи халăхсене мирлĕн те ирĕклĕн аталанса ӳсе пымашкăн яланлăхах май туса пама ССР Союзĕнчи халăхсем ирĕклĕхе юратакан сирĕн çĕршывсенчи халăхсемпе пĕрле çителĕклĕ таранах вăй тупăç тесе, эпир, ученăйсем, çирĕп шанса тăратпăр.

Фашизма хирĕç ăна пуçĕпех пĕтерсе тăкиччен кĕрешме хăйсен вăйĕсене пĕрлештернĕ демократиллĕ çĕршывсем сывă пулччăр!

Мĕнпур этемлĕх культурине аталантарассишĕн ĕçлекен ирĕклĕ наука сывă пултăр!

Академиксем: **Н. Державин, П. Капица, Д. Прянишников, А. Ферсман, Б. Келлер, Т. Лысенко, А. Фрумкин, Е. Ярославский, М. Митин, Ю. Готье;** СССР Наукăсен Академийĕн член-корреспонденчĕсем: **С. Бахрушин, П. Александров, А. Алиханов, И. Минц, Н. Проппер—Гращенков;** СССР Союзĕн халăх артисчĕ профессор **Р. Глизр;** профессорсем: **А. Тимирязев, Б. Завадовский, Н. Гудзий, Л. Пустовалов, Н. Романов, А. Алиханьян** т. ыт. те.

Совет ученăйĕсен фашизма хирĕçле митингне килнĕ саламсем

Королевство медицина обществин саламĕ

Королевство медицина обществин 5 пин членĕсемпе сотрудникĕсем Совет Союзĕнчи ученăйсене саламлаççĕ. Татăклă испытанин çак самантĕнче Совет Союзĕнчи халăхсем кăтартса паракан чаплă паттăрлăхран эпир пĕтĕм чĕререн тĕлĕнсе савăнатпăр. Гитлерăн фашистла агрессине, мракобесине тата чăнлăха ирсĕрлесе пăснине пуçĕпех çĕнтересшĕн вăй хурса кĕрешес ĕçре эпир пĕрлăхлĕ пулса тăратпăр. Мĕнпур çынсене вĕренме тата хăйсен пĕлĕвĕсене этемлĕхĕн ырă ĕçĕсене пама тивĕçлĕх кӳрекен правăллă эпир вĕсне çитиех çирĕплĕн тăма хатĕр. Совет Союзĕнчи ютташсемпе пĕрле пĕрлешӳллĕ ĕçе—тĕнчене вăрçă юлашкийĕсенчен сыватса çĕнĕ тĕнче тăвас ĕçе хутшăнмалли кун çитессе тӳсеймесĕр кĕтсе тăратпăр. Çав çĕнĕ тĕнчере этемлĕх ирĕклĕ те телейлĕ, савăнăçлă пурăнĕ.

Грей — Британи империйĕнчи Королевство медицина обществин президенчĕ.

Герберт Уеллс янă салам

Саламлатпăр та тĕлĕнсе хĕпĕртетпĕр! Эпир туятпăр, Российăшăн эпир халиччен мĕн туни вăл çителĕксĕр-ха.

Герберт Уэллс.

Эптон Синклер писатель янă салам

Совет ученăйĕсене чĕререн салам. Сирĕн çĕршыв урса кайнă выльăха — нацизма хирĕç хĕрешнине мĕнпур ăнлануллă американецсем пысăк тимлĕхпе сăнаса тăраççĕ.

Эптон Синклер.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 13-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 13-мĕшĕнче пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç çапăçнă. Вязьма тата Брянск енĕсенче уйрăмах вăйлă çапăçусем пулса пынă. Нумай хунсем хушши пынă хаяр çапăçусем хыççăн, çав çапăçусенче противника çынсемпе хĕçпăшал тĕлĕнĕнчен питех те пысăк çухатусем кӳрсе, пирĕн войскăсем Вязьмăран тухса кайнă.

Октябрĕн 11-мĕшĕнче нимĕçсенне 122 самолет, вĕсенчен сывлăшри çапăçусенче 16 самолет тата противникăн аэродромĕсенче 106 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 27 самолет пĕтнĕ.

Октябрĕн 13-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсенне 7 самолет персе антарнă.

* * *

Фронтăн Хĕвеланăç енчи чылай участокĕсенче, нумай йышлă мотомеханизированнăй чăссемпе тата авиаципе усă курса, çавтери пысăк çухатусем тунине пăхмасăрах, противник кунĕпех пирĕн войскăсене хирĕç малалла наступлении туса пыма хăтланнă. Нимĕçсем пирĕн позицисене атакăланинне хирĕç Хĕрлĕ Çар чăсĕсем вăйлăн тăрса çапăçаççĕ.

* * *

Пирĕн авиаци противника кунĕпех вăйлăн пыра-пыра çапнă. Сывлăшран татти-сыпписĕр пыра-пыра атакăласа, пирĕн самолетсем хамăрăн çĕр çинчи чăссене операцисем туса пыма активлăн пулăшса тăнă, противникăн фронт патне куçса пыракан резервисем çине тата унăн боеприпассем турттарса пыракан мотоколоннисем çине ăнăçлăн бомбăсем пăрахнă.

Совет çĕрĕн кашни пусăмĕшĕн фашистсем хăйсен салтакĕсен виллисене купи-купипе хăварса тата хĕçпăтал нумай пĕтерсе тӳлеççĕ. Октябрĕн 13-мĕшĕнче фронтăн пĕр участокĕнче кăна нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 6 пин çын ытла виллĕ тата аманнă, противник 64 танк, пехота ларса пыракан тата боеприпассем тиенĕ 190 автомашина, 23 оруди тата темиçе вунпар пулеметсем çухатнă.

* * *

Фронтăн Кăнтăр-Хĕвеланăç енче нимĕçсем çапăçăва çĕнĕ вăйсем кĕртсе пыраççĕ, çакăнта вĕсем Итали, Румыни тата Венгри войскисемпе усă кураççĕ. Вĕсене çухатусем нумай тӳсмелле çĕре пуринчен ытларах хăвала-хăвала кĕртеççĕ. Тăшман атакисене хирĕç çапăçса, пирĕн чăссем противникăн наступлението чарса тăраççĕ, противника чылай пысăк çухатусем кӳреççĕ. Çак енчи участоксенчен пĕринче Мелихов капитанăн авиаци чăсĕ виçĕ кун хушшинче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 2.500 çын, 6 танк, 7 бронемашина, 9 оруди, пулеметсен 122 точкине, войскăсем ларса пыракан 120 автомашинăна тата боеприпассем тиенĕ 22 лава пĕтерсе тăкнă. Фронтăн çак секторĕнчи сывлăшри çапăçусенче нимĕçсенне 7 самолет тата çĕр çинче 21 самолет пĕтерсе тăкнă.

* * *

Днепропетровск хули таврашĕнче партизансем фашистла захватчиксене хирĕç пĕр чарăнмасăр çапăçса пыраççĕ. Кунта партизансен куçса çӳрекен вăйлă отрячĕсем кĕрешеççĕ. М. Юлташ командир пулса ертсе пыракан отряд противникăн вак-тĕвек подразделенисене пĕр ывăнма пĕлмесĕр йĕрлесе пĕтерсе пырать. Акă отрядри боецсен виçĕ кун хушшинчи ĕçне кĕскен пăхса тухни. Сыхлăхлă разведчиксем пĕлтернĕ тăрăх, Л. ялĕн районĕнче нимĕç салтакĕсен икĕ взводран тăракан группи иртсе каймалла пулнă. Разведка начальникĕ партизансене çывăх çулпа фашистсене хирĕç тухмалла илсе кайнă. Партизансем пытанса ларса çапăçăва хатĕрленнĕ. Нимĕçсене 15—20 метра çити çывăха ярса, партизансем фашистсем çине гранатăсем вăркăнтарма пуçланă. Нимĕçсенчен питĕ сахаллăшĕ çеç тарса ĕлкĕрме пултарнă. Тепĕр кунне партизансем телеграф линин провочĕсене 30 çĕртен каса-каса татнă, çав линие нимĕçсем малтанхи кун кăна тӳрлетнĕ пулнă. Хăйсен лагерьне каялла тавăрăннă чухне партизансем пĕр связиста, мотоциклиста тата нимĕç чиновникне тытса чарса вĕлернĕ.

Ч. Юлташ ертсе пыракан партизансен пысăк мар группи Днепропетровска пырса кĕнĕ. Тĕттĕм пулнипе усă курса, вĕсем металлурги институчĕн общежитийĕ патне çитнĕ, унта нимĕçсен çар чăçĕ вырнаçса тăнă пулнă. Партизансем чӳречерен темиçе граната сыхсисем пăрахнă. Фашистсен вунпар салтакĕсем вилнĕ тата аманнă.

Октябрĕн 14-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 14-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç пĕтĕм фронтра çапăçнă, Хĕвеланăç енче уйрăмăнах вăйлă çапăçусем пулнă.

* * *

Фронтăн Çурçĕр-Хĕвеланăç енчи участокĕсенчен пĕринче пирĕн чăссене хирĕç атака пуçланă противника пирĕн артиллери хытă çĕмĕрнĕ, противникăн çапăçу хирне вилнисемпе аманнисем нумай выртса юлнă. Пирĕн пĕр часть темиçе кун хушши пынă çапăçусенче нимĕçсен противотанковăй 18 орудине, темиçе полевой орудине, минометсен 3 батарейине, пулеметсен 22 вăйне пĕтерсе тăкнă. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем 1.500 çынран кая мар вилнĕ тата 3.500 çынран кая мар аманнă.

Ленинград патне пымалли вырăнсенче çапăçакан пирĕн часть 20 пулемет, 100 çити автоматсем тата винтовкăсем нумай тытса илнĕ. Фронтăн Ленинград участокĕнчи секторсенчен пĕринче кĕçĕн лейтенантăн Яковых юлташăн танксен роти нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 170 çынна, противотанковăй тата полевой тупăсене 14 тупă пĕтерсе тăкнă.

Фронтра пирĕн самолетсемпе артиллери активлăн çапăçнă. Лейтенант Родионов командир пулса ертсе пыракан летчиксен группи тăшман аэродромĕ çине бомбăсем пăрахса нимĕçсен 9 самолетне çунтарса янă. Штурмовой авиацинчи самолетсен группи ăнăçлă атакăсем туса нимĕçсен темиçе тăлне, пехота ларса пыракан 120 ытла грузовой автомашинине тата горючи гуртарнă 10 цистернине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Фронтăн Кăнтăр-Хĕвеланăç енче пирĕн авиаци тăшманăн пĕр çĕре пухăннă пехотине, танксен колоннисене, артиллерипе минометсен батарейисене пыра-пыра çапать. Мироненко юлташăн подразделенийĕнчи летчиксем аллинах вĕçсе нимĕçсен танкĕсене тата противникăн кавалерийĕ çине пулеметсемпе тупăсенчен пенĕ. Çавăн пек пырса тапăннипе 15 танк, нумай автомашинăсене тата фашистла кавалеристсене пĕр эскадрона çити пĕтерсе тăкнă. Белецкий тата Ермаченко юлташсен чăсĕсенчи летчиксем тăпманăн аэродромĕсем çине вĕçсе пырса тапăннă чухне 12 «Мессершмитт» çине бомбăсем пăрахнă. Фронт участокĕсенчен пĕринче сывлăшри çапăçура нимĕçсен 4 истребительне персе антарнă.

* * *

Германи çарĕ тытса илнĕ районсенчи мирлĕ халăхран фашистла мерзавецсем мăшкăллама чарăнмаççĕ. Орел облаçĕнчи Рубча ялне йышăннă хыçăн нимĕçсем Григорий Ковалев хресченрен ялти актива тытса пама йыйтнă. Ковалев нимĕçсем паракан ыйтусем çине ответлеме килĕшмен. Çавăн хыççăн палачсем ăна асаплантарма тытăннă. Совет патриочĕ вилнĕ, анчах та вăл хăйĕн ютташĕсене тытгарса яман.

Мурачевка ялĕнче колхозница Иванькова икĕ ача çуратнă пулнă. Ача çуратнă хыççăн тепĕр кунне Иванькова ютташа нимĕç салтакĕсем йывăр ĕç тума хăваласа кайнă. Чирлĕ тата вăй кĕрсе çитеймен колхозница аран-аран утнă. Ĕçлĕ кун вĕçленес умĕн Иванькова ютташ ураран ӳкнĕ те, малалла ĕçлеме килĕшменнипе çинчен пĕлтернĕ. Ĕçлеме килĕшменшĕн фашистла тискер-кайăксем ăна персе вĕлернĕ. Амăшĕсĕр тăрса юлнă пĕчĕк ачисем выçса вилнĕ.

* * *

Апат-çимĕç промышленноçĕнче ĕçлекенсем Хĕрлĕ Çара тата пĕтĕм çĕршыва питех те кирлĕ çимĕç продукчĕсем парса тăраççĕ. Малтанлăха шутланă тăрăх, аш-какай промышленноçĕн предприятийĕсем виççĕмĕш квартал планне 105,3 процент тултарнă. Аш-какайран тунă консервăсене, иртнĕ çулти виççĕмĕш кварталтипе танлаштарсан, кăçал ултă хут нумайрах кăларнă. Петропавловскри комбинат квартал планне 127 процент тултарнă. Брынза туса кăларасси çĕршывра, 1940 çултипе танлаштарсан, икĕ хута яхăнах ӳснĕ.

Октябрĕн 1-мĕш тĕлне пулăсене пĕлтĕрхи çав число тĕлне тытнинчен 2.300 пин пăт ытларах тытнă. Атăл—Каспий, Урал—Каспий, Азов—Хура тинĕс тата Крымри пулă промышленноçĕн тресчĕсем виççĕмĕш квартал планне ирттерсе тултарнă. Камчаткăри, Дагестанри тата Охото-Аянскри пулă промышленноçĕн предприятийĕсем пулă тытмалли çулталăк планне тултарнă та ĕнтĕ. Фронт çывăхĕнчех ĕçлекен Çурçĕрти пулăçсем пулă тытас плана чылай ӳстерсе тултараççĕ.

Оборона фондне

Мускав çыннисем 75 миллион тенкĕ панă

Октябрĕн 11-мĕш тĕлне тăван çĕршыв оборонин фондне Мускав халăхĕнчен 75 миллион тенкĕ укçан пырса кĕнĕ.

Кунçăр пуçне, москвичсем Госбанка Государство заемĕсен облигацийĕсене 10,5 миллион тенкĕлĕх, революциччен туса кăларнă ытларах укçасене 5.247 тенкĕ те 50 пуслăх, 125 грамм платина, 7,1 килограмм ытларах тата 339 килограмм кĕмĕл панă. (ТАСС).

Бивербрук радио тăрăх тухса калани

ЛОНДОН, октябрĕн 13-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, çар снабженийĕн министрĕ тата виçĕ державăн Мускаври конференцинче пулнă Англи делегацийĕн руководителĕ лорд Бивербрук конференци çинчен радио тăрăх сăмах тухса калать. Бивербрук хăйĕн сăмахĕнче çапла калать: Англипе Америка делегацийĕсем çакăн пек вывод патне пырса тухрĕç: Великобританин тата Пĕрлешӳллĕ Штатсен ресурсĕсене шута илсе, кашни енĕ хăйĕн çине хăйĕн тӳпине илсен, вырăссене вĕсем мĕн ыйтнине пурне те парса тăма пулать.

Россия мĕн ыйтнине эпир пурне те ăшăнтăмăр. Эпир,—тенĕ Бивербрук,—СССР мĕн чухлĕ танк тата самолет ыйтрĕ, çавăн чухлĕ пама пултăмăр. Октябрь уйăхĕнче пама пулнине пурне те тăратнă ĕнтĕ. Çавăн пекех эпир тупăсем, лайăх орудисем нумай тата боеприпассем нумай пама пултăмăр, çав орудисенчен пысăккисем те пур. Кунсăр пуçне, сырье — алюминий, никель, хура тăхлан, цинк, шурă тăхлан, латунь, каучук, джут, çăм, фосфор, алмазсем тата ытти материалсем нумай паратпăр.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем вырăссем мĕн чухлĕ ыйтнине шута илсе нефть продукчĕсем тăратассине хăйсен çине илеççĕ. Хăшпĕр сырьесем тĕлĕпне панă заявкăсене çапах та малашне Лондонра тата Вашингтонра пăхса тухмалла пулать.

Малалла Бивербрук, вырăс завочĕсем питĕ лайăх тата пысăк пахалăхпа продукци туса кăлараççĕ, тесе пысăк хăй панă. Çав заводсене кайса курнă специалистсем авиаци завочĕсемпе авиаци моторĕсен завочĕсем хальхи вăхăтра Англипе США тунă çитĕнӳсеннен кая мар, тесе каласа пачĕç. Малалла Бивербрук çапла калать: уйрăмăнах, вырăссен питĕ паха çĕнĕ самолетсем—«МИГ-3» йышши истребительсем пур. Хĕвеланăçĕнче Англи самолечĕсем Германи истребителĕсенчен лайăхрах пулчĕç, çавăн пекех Хĕвелтухăçĕнчи фронтра та «Мессершмиттсем» хăйсенчен лайăхрах самолетсене—«МИГ-3» йышши истребительсене тĕл пулчĕç. Çĕнĕ йышши тепĕр самолет вăл—штурмовик—пикировка тăвакан бомбардировщик, ăна йывăр броньăпа витнĕ. Ку самолет неприятелĕн пĕр çĕре пухăнса тăнă войскисене тата соединенийĕсене атакăланă чух хăйĕн паха енĕсене катартрĕ.

Вырăссем вĕсене валли хăйсен тăван çĕршывĕнче тата ютçĕршывсенче—Англипе США-ра туса кăларакан хĕçпăлпа питĕ лайăх усă курма пултараççĕ. Вĕсен летчикĕсем питĕ чаплă, вĕсем самолечĕсене пăхса тăрас тĕлĕпне ĕçлекен механиксем Англипе Америка механикĕсенчен нихăш енчен те юлмаççĕ.

Юлашкинчен Бивербрук çапла калать: вырăссен премьер-министрĕ пирĕн халăх вĕçне тухичченех, çĕнтерӳ тăвичченех çапăçма шутланине пĕлет. Вырăс халăхĕ те çакăн пекех, çирĕп шухăшлă пулнине эпĕ шанса тăратăп. Хальхи вăхăтра вăл противник çапнин, тапăннин пĕтĕм йывăрлăхне хăй çине илчĕ. Унăн хăюлăхĕ, пулса иртекен событисен уйăнчи çирĕплĕхĕ, вăл Российăна ĕненни, вăл хăйĕн тăван çĕршывне юратни, захватчиксем валли нимĕн те хăвармасăр хаклă япаласене пĕтерсе тăкни Кивĕ Тĕнчере кăна мар, тата Çĕнĕ Тĕнчере те тĕлĕнтерсе савăнтарать.

Россия валли суднăсем кирлĕ пулсан, эпир ютçĕршывсенчен продовольстви турттарма пăрахăпăр. Вырăссен хулисене сыхлама хĕçпăшал кирлĕ пулсан, эпир хамăрăн пĕтĕм пушă вăхăта та паратпăр. Эпир пĕтĕм хуйхă-суйха тата савăнăçа вырăссемпе пĕрле пайлатпăр. Сталин пулăшу илме тивĕçлĕ. Совет Союзне çуруннехи кампанинне çителĕклĕ таран тĕрлĕрен çар снаряженийĕпе кĕме пулăшмалла.

Хĕле кĕме хатĕрленнине тĕрĕслетпĕр

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Выльăхсене хĕл каçарма мĕнле хатĕртенсе çитнине тĕрĕслес тĕлĕпне иртекен икĕрнелĕхе ертсе пыма ВЛКСМ райкомĕ çумĕнче вăхăтлăх комисси организацилечĕ. Унăн председателĕ пулса бюро членĕ зоотехник Родионова юлташ ĕçлет.

Халĕ районĕпе 62 колхозра тĕрĕслеве вĕçленĕ. Тĕрĕслӳн итогĕсене чылайăшне комсомолецсен тата колхозниксен пухăвĕсенче сӳтсе-явнă.

* * *

ОКТЯБРЬСКОЕ. «Социализм» колхозра тĕрĕслӳ вăхăтĕнче витесене тирпейлес, шăтăксене питĕрес тĕлĕпне ĕç начар тăни палăрнă. Çавăнпа та ятарласа комсомолецсемпе çамрăксен бригадине организацилеменĕ.

* * *

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Ильери Мичурин ячĕпе тăракан колхоз çак кунсенче чăх-чăп валли çĕнĕ вите туса пĕтерчĕ. Витене 300 чăх ытла вырнаçать.

Англипе Германи хушшинчи вăрçă

ЛОНДОН, октябрĕн 13-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтерĕçĕ: октябрĕн 13-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле неприятель авиацийĕ Англи çинче каллех активлă пулман. Çурçĕр тата Хĕвелтухăç Англири темиçе пункт çине бомбăсем пăрахнă. Çурçĕр Англири хăшпĕр пунктсенче сиен кӳнĕ, жертвăсем пур. Ытти вырăнсенче тунă çинен пысăк мар. Неприятелĕн пĕр самолетне пĕтерсе тăкнă.

Октябрĕн 13-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англин 300 ытла бомбардировщикĕ Германи çине кайса бомбăсем пăрахнă. Пырса тапăнмалли тĕп объектсенчен пĕри Нюренберг пулнă, унта пысăк вырăн йышăнса тăракан çар завочĕсем вырнаçнă. Бомбăсене вăйлăн пăрахнă чухне çанталăк условийĕсем лайăх пулнă. Çурçĕр-Хĕвеланăç тата Хĕвеланăç Германире çанталăк условийĕсем начартарах пулнă пулсан та, Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем чылай объектсем çине, пуринчен ытларах Бремен порчĕ çине пырса тапăннă. Çак операцисенчен Англин 11 бомбардировщикĕ хăйсен базисене тавăрăнман.

ЛОНДОН, октябрĕн 13-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Лондонра çакă паллă пулнă: октябрĕн 13-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем Баварири, Рейн облаçĕнчи тата Çурçĕр-Хĕвеланăç Германири объектсем çине кайса бомбăсем пăрахнă.

Англин авиаци министерстви хăларнă коммюникере çапла кăтартса панă: октябрĕн 12-мĕшĕнче кăнтăрла «Бленхейм» йышши бомбардировщиксем, истребительсем нумай хӳтлесе пынипе, Булоньри доксене атакăланă. Доксем тата чугунçулсем çине бомбăсем тĕл пырса ӳкнине палăртнă. Бомбăсем пăрахнине пула пысăк пушарсем тухнă. Англи истребителĕсем противникăнне 4 истребитель персе антарнă, çак çапăçура Англин икĕ машина пĕтнĕ. Англи бомбардировщикĕсен тепĕр соединенийĕ истребительсем хӳтлесе пынипех Голланди çыранĕнче противник суднисен караванне атакăланă. Атакăна аялтан вĕçсе тунă. Бомбăсем танкер тата грузовой пысăк судно çине ӳкнĕ. Çак операцисенчен Англин икĕ бомбардировщикĕ хăйсен базисене тавăрăнман. Çав кунах Англи истребителĕсем, Ла-Манш проливĕ тĕлĕнче хĕçпăллă разведкăра пулнă чухне, неприятелĕн истребителĕсемпе тĕлпулнă. Сывлăшра пулса иртнĕ çапăçура противникăнне 3 самолет персе антарнă. Англи истребителĕсен сухату пулман.

Англи самолечĕсем Итали караванне тапăнни

ЛОНДОН, октябрĕн 13-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 11-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсемпе самолет-торпедоносецĕсем Вăтаçĕр тинĕсĕн вариче Итали караванне тапăннă. 20 минута хушшинче караванра пулнă 4 пароходран виççĕшне торпеда ярса сиен кӳнĕ. Пароходсене хӳтлесе пыракан эсминецсем ним тума пĕлмесĕр аптăраса пĕр енчен тепĕр енне сирпĕнсе çӳренĕ. Октябрĕн 11-мĕшĕнче ирхине ирех каравана каллех тапăннă, анчах мĕнле результат пулнине курма май килмен.

Англи авиацийĕн тата Германипе Итали авиацийĕн çухатăвĕсем

ЛОНДОН, октябрĕн 13-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 12-мĕшĕнче вĕçленнĕ эрне хушшинче Англи авиацийĕ 19 самолет, Италипе Германи авиацийĕ—13 самолет çухатнă. Англи тĕлĕнче Германи авиацийĕ 4 бомбардировщик, Англи авиацийĕ—пĕр машина çухатнă. Европа çинче Англи авиацийĕ 10 бомбардировщик тата икĕ истребитель çухатнă. Германи авиацийĕн икĕ самолет пĕтнĕ. Сывăх Хĕвелтухăçĕнче Англи авиацийĕ 6 самолет, Италипе Германи авиацийĕ—3 самолет çухатнă. Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра Англи самолечĕсем Германин 3 бомбардировщикне пĕтерсе тăкнă. Кунсăр пуçне, Англин çар карапĕ Вăтаçĕр тинĕсĕнче противникăн пĕр самолетне персе антарнă.

Серби халăхĕн кĕрешĕвĕ

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 13-мĕш. (ТАСС). Шведсен «Гетеборгс постен» ятлă хаçатĕ «Сербия — уççăнах восстани тăвакан çĕршыв» ятлă статья пичетлесе кăларнă. Çав статьяра хаçат çапла сырать: «Продовольстви тата чĕртавар çитменни ӳссе пынă май, оккупацинленĕ территорисене пăхăнтарса тăрас ĕçре нимĕçсем пайтах, кунран кун вăйланса пыракан йывăрлăхсем курма пуçлĕç. Ывăр наказанисем парасçĕ пулин те, Сербире, Хорватире, Черногорире кулисерен тенĕ пекех террорла актсем пулса пырасçĕ. Ахă нумай пулмасть, полевой суд лагерьсене хупса лартнă çынсене пурне те персе вĕлермелле приговор йышăнни çинчен пĕлтерчĕç. Фашистсене хирĕçлекен кашни пĕчĕк ĕçшĕнех сахалран та 10-шар заложник персе пăрахасçĕ. Кăнтăр Сербири Ниш районĕнче повстанецсен лайăх организацинленнĕ пысăк отрячĕсем кĕрешеççĕ, вĕсенче тăракан халăх шучĕ 20 пин çынна çитет. Серби халăхĕ наци ирĕклĕхĕшĕн кĕрешесси вăйланса, сарăлса пырать. Патроитла отрядсен йышне офицерсем, студентсем, ĕççĕр тăрса юлнă халăх, т. ыт. те нумай пырса кĕреççĕ. Хĕрхенме пĕлми хаяр çапăçусем туса, Серби патриочĕсем Германипе Итали фашисчĕсене хирĕç кăна мар кĕрешеççĕ. Çавăн пекех Серби патриочĕсем оккупаци влаçĕсен порученийĕсене пурнăçа кĕртме хăякан сербсене хирĕç те ним шеллемесĕр кĕрешеççĕ. Выçлăх тата пур япала та хакланса кайни халăх шухăш-кăмăлне лăплантармалли майсене пĕтерсе пырать. Югослави облаçĕсем оккупантсене, шыва путакан çын мăйĕ çинчи йывăр чул пек, тĕпĕр путлăха туртаççĕ».

Шабац хули патĕнче пулса иртнĕ партизанла çапăçусем çинчен тĕплĕн пĕлтерни

СТАМБУЛ, октябрĕн 13-мĕш. (ТАСС). Сербири «Ново време» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, серби партизанĕсем нимĕç оккупанчĕсене хирĕç пысăк тимлĕхпе кĕрешеççĕ. Шабац хулин районĕнче восстани пуçланса кайнă, çав восстание духовенство та хутшăннă. Районри мăнпур ялсенчи хресченсем партизансен отрячĕсене тунă, çав отрядсене халиччен офицер пулнă çынсем, учительсем т. ыт. те ертсе пырасçĕ. Партизансен отрячĕсем Шабац патне пымалли çулсем çинче пухăнса тăнă, вĕсем хулана чăннипех штурмласа унта вырнаçнă нимĕç салтакĕсене тытса илме хатĕрленнĕ. Хула халăхĕ партизан отрячĕсене уççăнах пулăшнă. Нимĕçсене пулăшма Хорватирен усташасен икĕ роти пырса çитнĕ. Çапла пулсан та, партизансем отрячĕсем хулана атакăлама пуçланă.

Германин нумай йышлă чаçĕсем тунă малтанхи атакăна сирсе яма пултарнă. Çапăçу вăхăтĕнче хула пысăкăкăн сиенленнĕ. Хулапа юнашар ялсене нимĕçсем вут чĕртсе çунтарса янă. Çапла пулсан та, партизансем атака тума чарăнман-ха.

Польшăри партизанла движени

НЬЮ-ИОРК, октябрĕн 13-мĕш. (ТАСС). Оверсис ньюс агентствин Стокгольмри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Польшăн нацистсен контролĕнче тăракан районĕсенче, уйрăмах Минск-Мазовецк районĕнче тата Варшава патĕнче халăхи вăхăтра Польша партизанĕсем вăйлăн ĕçлеме пуçлани çинчен сведенисем пур.

НЬЮ-ИОРК, октябрĕн 13-мĕш. (ТАСС). Оверсис ньюс агентствин Лондонри корреспонденчĕ çырнă тăрăх, Польша çыннисем çапла пĕлтереççĕ: иртнĕ эрнере Островенка таврашĕнче Польша партизанĕсем Германин фронт валли илсе каякан çар материалĕсем тиенĕ çар поездне тытса илнĕ. Партизансем çавăн пекех тата Люблино патĕнче Германин кавалери патрулĕ çине тапăннă, çакăнта Германин 14 салтакне вĕлернĕ. Седлец çывăхĕнче партизансем Германин 16 салтакне вĕлернĕ. Польшăри гарнизонсене Австрин ватă салтакĕсенчен тата Итали чаçĕсенчен тăракан резервсемпе вăйлатасси çинчен нимĕçсем приказ панă.

Франци офицерĕсем Петэн патне янă çыру

ЛОНДОН, октябрĕн 13-мĕш. (ТАСС). «Ньюс кроникл» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Çурçĕр Африкăра тăракан французсен вăпаспи офицерĕсем темиçе çĕр çын Петэн патне çыру янă. Вĕсем Петэна отставкăна тухма хушаççĕ. Нацистсемпе килĕштерсе ĕçлеме тăрăшнипе Петэн пĕр чарăнми тĕпĕр шăтăкалла куçса пырать, тесе айăпласçĕ вĕсем Петэна. Хăйсен çырăвĕнче вĕсем çапла сырасçĕ: «Эсир килĕшес пулать тесе каларăр, анчах эсир пыракан çул пирĕн пуçмăрлăха кăна кĕртсе ӳкерме пултарать». Петэна Гитлерпа килĕштерсе ĕçленĕшĕн хытă ятласа, офицерсем малалла çапла сырасçĕ: «Пирĕншĕн Гитлер яланах тупа тунине пăсакан преступник пулса тăрать. Франция ним иккĕленмесĕр Черчилльпе Рузвельт тĕллевĕсемпе пĕр енчен, Гитлерăн çĕнĕ йĕркисенчен—тепĕр енчен—тĕрĕссине пĕрне суйласа илчĕ. Франция сирĕн политикăна йышăнмасть».

Англипе Совет профсоюзĕн комитет ларăвне Мускава Англири тред-юнионсен Конгресĕн делегацийĕ килни

Кăçалхи октябрĕн 13-мĕшĕнче Мускава Англипе Совет профсоюзĕн комитет ларăвне хутшăнма Англири тред-юнионсен Конгресĕн делегацийĕ пĕтĕм составĕпе килсе çитнĕ.

Англири тред-юнионсен Конгресĕн делеги составĕнче çаксем пур: Франк Уолстенкрофт—Англири тред-юнионсен Конгресĕн председателĕ, Вальтер Ситрин—Англири тред-юнионсен Конгресĕн генеральнăй секретарĕ, В. П. Аллен—Англири тред-юнионсен Конгресĕн членĕ тата машинистсемпе кочегарсен союзĕн генеральнăй секретарĕ, А. Конлей—Англири тред-юнионсен Конгресĕн членĕ тата çĕвĕçсемпе швейниксен союзĕн генеральнăй секретарĕ, Х. Н. Гаррисон—Англири тред-юнионсен Конгресĕн членĕ тата государство работникĕсемпе муниципальнăй работниксен союзĕн представителĕ тата делеги секретарĕ Эрнест А. Белл.

Мускавра делегацие çаксем кĕтсе илнĕ: ВЦСПС секретарĕ С. Л. Брегман юлташ, ВЦСПС-ăн организационно-инструкторски отдел заведующийĕ П. И. Богоявленский юлташ, центрти чугунçулсем çинчи рабочисен профсоюзăн Центральный Комитет председателĕ М. П. Тарасов юлташ тата çĕвĕ промышленноçĕнчи рабочисен профсоюзăн Центральный Комитет председателĕ А. С. Малькова юлташ.

Германин Францири войскисене Хĕвелтухăçĕнчи фронта куçарни

АНКАРА, октябрĕн 12-мĕш. (ТАСС). Анатолири агентство пĕлтернĕ тăрăх, Германи командованийĕ оккупацинленĕ çĕршывсенчи, уйрăмах Францири гарнизонсене вăйлăн чакарать. Хĕвелтухăçĕнчи фронтра пысăк çухатусем тӳснипе, Германи командованийĕ оккупацинленĕ территорисенче çар ĕçне вĕрентсе хатĕрленĕ салтаксене сахаллатнăçемĕн сахаллатса пырать, вĕсем выранне призыв çулне çитмен резервистсене тата çар ĕçне сахал вĕреннĕ çамрăксене хăварать.

Агентство сведенийĕсем тăрăх, юлашки эрне хушшинче Франциран Германин 200 пин салтакне Хĕвелтухăçĕнчи фронта янă.

Германире апат-çимĕç тĕлĕшĕнчен пурнăç йывăрланса çитнĕ

НЬЮ-ИОРК, октябрĕн 13-мĕш. (ТАСС). Оверсис ньюс агентствин корреспонденчĕ Цюрихран çапла пĕлтерет: Германи пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, Германире апат-çимĕç тата тумтирсем çитменни ытларах та ытларах сисĕнет. Транспортри йывăрлăхсем вăйланнă. «Кенигсбергер альгемейне цейтунг» хаçат, тырпул япăх пулни тата транспорт тĕлĕшĕнчи йывăрлăхсем çине кăтартса парса, халăха продуктсем çитменнипе килĕшсе пурăнма чĕнет. Корреспондент сăмахĕсем тăрăх, апат-çимĕçе валеçмелли правилăсене халăх час-часах пăсать. Нумаях та пулмасть, Германи пичечĕ хĕрарăмсен группи продовольстви тиенĕ пилĕк грузовик çине тапăнни çинчен пĕлтернĕ. «Ахнер цейтунг» хаçат хула халăхĕ апат-çимĕçсене ялсенчен тата спекулянтсенчен илес пулсан çирĕп мерăсем йышăнасçĕ, тесе асăрхаттарать. Корреспондент çавăн пекех тата Германире апат-çимĕç илмелли суя карточкăсем сутасси питех те пысăккăн сарăлнă, тесе кăтартса парать.

Норвегири выçлăх

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 13-мĕш. (ТАСС). «Дагенс нюхетер» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Норвегире продовольстви тĕлĕшĕнчен ĕçсем пит те йывăрланса кайнă. Предприятисемпе вырăнти самоуправленисем нумайĕшĕ хăйсен рабочийĕсемпе служащийĕсене тата унти халăха выçă вилĕмрен мĕнле те пулин çăлса хăварасчĕ тесе ирĕксĕрех тĕрлĕрен мерăсем йышăнасçĕ. Норвегири пичет çапла сырать: какай илме çĕнĕ нормăсем туса панă хыççăн Норвеги халăхĕ уйăхра икĕ хутчен какай яшки çиме ĕмĕтленме пултарать, пирĕншĕн ĕнтĕ вăл та пысăк çитĕнӳ пулса тăрать, тет. Берген, Кристиансанн, Ставангер пек портлă хуласенче те пулă çителĕксĕр. Мĕнпур тытнă пулăран 80 проценчĕ Германне кайса тăрать. Норвегия вăрçăччен ютçĕршывсенчен çулсерен 400 пин тонна тырă илсе тăнă, халĕ Германия Норвегие пĕтĕмпе те 55 пин тонна кăна парать.

Нимĕçсем Венгри хресченĕсене çаратаççĕ

НЬЮ-ИОРК, октябрĕн 13-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Стамбулри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, ĕç çинчен лайăх пĕлсе тăракан, Венгрипе килсе çитнĕ çынсем çапла пĕлтереççĕ: влаçсем тăтăшах çаратнине пула Венгри хресченĕсем выçса вилесси патне çитнĕ. Нимĕçсен аллинче ан лектĕр тесе, нумайĕш хресченсем хăйсем валли юлнă продовольствие чытараççĕ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли— ăшă туммтирсем

КАНАШ. («Чăваш Коммуни» корр.). Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсемпе кĕпе-йĕмсем пухасси халăхăн чыслă ĕçĕ пулса тăчĕ. Районри ĕçсыннисем тăван çĕршыва мухтавлăн хӳтлекенсене ăшă тумлантарма çĕнĕрен çĕнĕ ятлаçсем параççĕ.

Октябрĕн 10-мĕш тĕлне Инвалидсен «Красный воин» артель коллективĕ 62 ваткăллă брюки, 58 ваткăллă фуфайка, 58 мулаххай, 12 мăшăр çăматă, 6 тир, 5 мăшăр ăшă кĕпе-йĕм, 19 алшăлли т. ыт. ятлаçсем панă. Артельри рабочисемпе служащисем Хĕрлĕ Çара çакăн пек активлăн пулăшни ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе ĕçлекен комисси хăйĕн ĕçне пĕлсе организацинленичен килнĕ. Комисси членĕсем Корчагинпа Морозов коммунистсем фронта пулăшни пысăк ĕç пулса тăни çинчен артельре ĕçлекенсем хушшинче агитаци ĕçне анлăн сарса янă. Çавна май Хĕрлĕ Çар валли ăшă ятлаçсем пухас ĕçе пĕтĕм артель коллективĕ хутшăннă. Апла пулсан та, вĕсем фронта пулăшас ĕç кунна пĕтнĕ тесе шутламаççĕ. Нумай работницăсем халĕ татах çăмран алшăисем, чăлхасем сыхаççĕ, ăшă кĕпе-йĕмсем çĕлеççĕ.

— Тăван çĕршыва сыхлахансене ăшă тумлантарма кирлĕ çи-пуçа хатĕрлеме пĕтĕм чунтан тăрăшатпăр,—тет артель правленийĕн председателĕ Корчагин юлташ.

Корчагин коммунист сăмахĕ ĕçпе сыхăнать. Вăл ертсе пыракан артель коллективĕ Хĕрлĕ Çара пулăшас чыслă ĕçре районра чăннипех малта пырать.

Çавăн пекех куç лечебницинче ĕçлекенсен коллективĕ те мухтава тивĕç. Кунти работницăсем пурте ик-виçĕ ăшă ятала панă. Пысăк мар коллектив 4 тир, 20 мăшăр ăшă кĕпе-йĕм, 30 çĕнĕ свитр, 3 килограмм çăм т. ыт. те пухнă.

Хĕрлĕ Çара пулăшас ĕçе райпотребсоюзра ĕçлекенсем хушшинче те лайăх организацинленĕ. Вунвиçĕ служащирен вуниккĕшĕ ăшă тумтирсемпе кĕпе-йĕмсем хатĕрлесе панă. Коллективран юлнă пĕр çынĕ те халĕ васкасах çăмран чăлхапа алшăш сыхать.

Т. ИВАНОВ.

* * *

КАНАШ. «Авангард» промысла артельĕнчи рабочисемпе работницăсем тата служащисем Хĕрлĕ Çар боецĕсене ăшă тумтирсем парса пулăшас ĕçе пысăк хаваслăхпа туса пыраççĕ. Октябрĕн 7-мĕшпе 8-мĕш хушшинче вĕсем 20 мăшăр çăматă, 3 мăшăр алшăш, пĕр мăшăр çăм чăлха, 1 мăшăр портянка, пĕр ăшă кĕпе пухрĕç. Паянхи куна пурĕ 50 мăшăр çăматă, 14 мăшăр алшăш, 21 мăшăр çăм чăлха, 3 çĕлĕк, 3 ăшă кĕпе, 2 алшăлли, тăлăп, брюки, кĕрĕк пиншак, пĕр мăшăр портянка пухнă.

Правлени председателĕ А. В. Васильев юлташ пĕр кĕрĕк пиншак, пĕр мăшăр çăматă, пĕр çĕлĕк, культсовет председателĕ М. С. Степанов юлташ—тăлăп, пĕр мăшăр портянка, правлени членĕсем кашниех пĕрер мăшăр çăматă пачĕç.

Тăван çĕршыва геройла хӳтлекен Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе чи малтанах активлăн хутшăнни ытти сменшĕн паха пример пулса тăчĕ.

Ăшă тумтирсем пухас ĕç малалла та сарăлсах пырать.

Г. МИХАЙЛОВ.

Ленин ячĕпе тăракан библиотека вăрçă кунĕсенче

МУСКАВ, октябрĕн 11-мĕш. (ТАСС). Пĕтĕм Союзри Ленин ячĕпе тăракан Мускаври библиотека пĕтĕм тĕнчипе чи пысăк книгохранилище пулса тăрать. Вăл библиотекăна кашни кун 400 çын ытла пырать. Унта тĕрлĕ профессиллĕ çынсем: инженерла-техникла научнăй работниксем, студентсем, боецсем, Хĕрлĕ Çар командирĕсем тата ытти тесе пыраççĕ. Ирхине 9 сехетрен пуçласа каçхине 7 сехет те 30 минутăччен вĕсем наукăллă ĕçсем туса ирттереççĕ, тĕрлĕ специальность пĕлĕвĕсене вĕренсе алла илеççĕ, пушă вăхăтсене кĕнекесемпе журналсем вуласа ирттереççĕ.

Пыракансене кунта кашни кунах 2.700 кĕнекене яхăн, 275 журнал, 220 хаçат парса тăраççĕ.

Библиотекăна çӳрекенсем наукăпа техника, истори кĕнекисене, тĕнчери лару-тăрупа çар ыйтăвĕсем тăрăх çырнă литературăна тата тĕрлĕрен справочниксем ытларах ыйтаççĕ.

Библиотека халь те, вăрçăччен пекех, пĕрмаях çĕнĕ литературăсем туянса, пуянланса пырать. Çĕршывăн нумай хулисенчи издательствăсенчен кашни кун 300 кĕнекене яхăн, 100 журнал, 2000 экземпляр хаçат килсе тăрать.

Малтанхи пекех халь те Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи, Англири, Кайтари, Турцири, Австралири, Аргентинăри, Индири, Иранри, Мексикăри, Японкири, Монголири тата ытти çĕршывсенчи пысăк библиотекăсемпе сыхăну тытать. Библиотекăпа ютçĕршывсенчи 300 яхăн организацисем сыхăну тытса тăраççĕ. Вĕсенчен Вашингтонри конгресс, библиотеки, Нью-Йоркри публичнăй библиотека, Британири музей, Оксфорд, Бирмингам, Гарвад тата Чилири университетсен библиотекисем, Гавайри наукăсен академийĕ тата ытти тесе сыхăнса тăраççĕ. Çав библиотекăсемпе яланах çĕнĕ кĕнекесене улăштарса илеççĕ. Ютçĕршывсенче совет литературипе питех те пысăккăн интересленеççĕ, вăл çĕршывсенчен тĕрлĕ кĕнекесем пирки ыйтса янă заказсем пулмасăр пĕр кун та иртмест.

Ленин ячĕпе тăракан библиотека массăллă ĕçе анлăн туса пырать. Çак кунсенче читальнăн пысăк залĕнче нимĕç фашизмне хирĕç пыракан отечественнăй аслă вăрçă çинчен выставка уçăлнă. Пурне те çар ĕçне вĕрентмелли материалсем тăрăх тата Октябрьти Социализмлă Аслă Революци XXIV çул тултарнă ятпа, Сталинла Конституцие йышăнни пилĕк çул тултарни çинчен выставка уçма хатĕрленеççĕ. Çавăн пекех библиотека чылай госпитальсемпе те сыхăну тытса тăрать, сураннăнă боецсене хăй енчен пĕрмаях пулăшать.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. Малти позицисенче. Б. УТКИН фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Вязьма енчи вăйлă çапăçусем

ВЯЗЬМА ЕНЕ, октябрĕн 13-мĕш. (ТАСС). Вязьма енче темиçе кун хушши ĕнтĕ вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Обстановка çавтери йывăрланса çитнĕ. Нимĕç войскисене уйрăм участоксенче пирĕн оборонăна татма тата пирĕн чаçсем тăракан вырăна савăлланса кĕме май килнĕ. Гитлеровецсем, çĕнĕ подкреплени илнĕ хыççăн, наступление сарса пыма хăтланаççĕ. Çапăçусем кăнтăрла та, çĕрле те пулса пыраççĕ. Сывлăша тупă сассисем вăйлăн кĕрлесе тăраççĕ. Тăшман чĕрĕ вăйсем енĕпе те тата материальнăй чаçсем енĕпе те пысăк çухатусем тӳсет.

Пирĕн войскăсем, фашистсен чаçĕсем тăвакан хаяр атакăсене сирсе пăрахса, оборонăн çĕнĕ вырăнне куçаççĕ. Н-ски часть, противникăн йыш тĕлĕшĕнчен чылай пысăк вăйĕ хĕснипе каялла чакса çĕнĕ вырăн йышăннă та, каç пулнă тĕле контратака туса, противника вăл йышăнса тăнă К. пунктран хăваласа кăларнă тата çав района йышăнса çирĕпленсе тăнă. Танк чаçĕсенчен пĕри, противник вĕçĕмсĕр атака тунине сирсе пăрахса, нимĕçсен 96 танкне, 22 бронемашинине, 93 транспортнăй машинине, 20 минометне çунтарса янă, нимĕçсен 1500 салтакĕпе офицерне яхăн пĕтерсе тăкнă. Кунсăр пуçне çав чаçех противникăн виçĕ самолетне персе антарнă.

Вязьма енче çапăçакан пирĕн авиаци противникăн автобронетанковăй колоннисене тата унăн пухăнса тăнă войскисене ăнăçлăн çĕмĕрсе пырать.

Фронт линийĕ патне пирĕн подкрепленисем вĕçĕмсĕр пырса тăраççĕ.

И. ГРИБОВ.

Çар ĕçне вĕренме пулăшакан фильмсем

Çар ĕçне вĕренекен граждăнсене пулăшас майпа Мостехфильм студийĕ «Çар ĕçне вĕренекенсене пулăшма» ятлă серипе виçĕ картина ӳкерсе пĕтернĕ. «Тăшман самолетне пĕтерсе тăкăр» темăпа кăларнă фильм тăшман самолетне пулеметсемпе, пулеметпистолетпа, автоматпа тата винтовкăпа мĕнле персе ӳкермелли çинчен вĕрентет.

Ку картина нимĕç самолечĕсене хăй енчен палласа илмеллине, вĕсем мĕн чухлĕ инçете вĕçнине, çунаттисен пысăкăшне, мĕн чухлĕ бомба илме пултарнине, экипаж членĕсен шутне пĕлме пулăшать. Бомбардировщиксемпе истребительсем вĕçнĕ чухне ăна çĕр çинчен персен, вăл хăш тĕлтен часах сиенленме пултарнине те кăтартса панă.

Фильм валли персе ӳкернĕ нимĕç самолечĕсене ятарласах ӳкерсе илнĕ.

«Кăсъери артиллери» ятлă картинăра граната—массăллă хĕçпăшал пулса тăни тата ăна кашни çын пĕлме тивĕçли çинчен калать. Кунта граната ывăтассине вĕреннине пĕрлех пирĕн мухтавлă боецсем çынçиен фашистсене гранатăпа хăюллăн та тĕл ывăтса пĕтерсе тăкнисемпе те паллаштарать.

Çавăн пекех, миномет çинчен инструктивнăй кинокартинăна та кăларасçĕ. Окопсем чавма, маскировка тума вĕренмелли темăпа «Техника самоокапывания» ятлă фильм тĕплĕн вĕрентет. Кашни боецăн, тӳрем вырăнта пулсан, тăшман персе тăнинчен хӳтленме пĕлмелле. Çаксем çинчен çĕнĕрен кăларнă картинăсем пĕтĕмпех каласа парасçĕ.

— Фашистла хура çăхансене тӳрĕ персе ӳкерме вĕренĕр,—тесе чĕнет кашни сынна картина.

Çак фильмсене курни программăна лайăхрах ăнланса илме, çар техникине тĕплĕнрех вĕренме пулăшать.

Н. Ю.

„Тутимĕр“ пьесăна лартма хатĕрленеççĕ

Чăвашсен Академи театрĕ Ухсай Якăвĕ çырнă «Тутимĕр» ятлă 5 актлă пьесăна лартма хĕрӳллĕн хатĕрленет. Пьесăри ĕç XVIII ĕмĕрĕн вĕçĕнче Башкирири чăвашсем хушшинче пулса иртет. Пьесăра чăвашсем пушкăрт халăхĕн Юлай Салаватăчĕ ятлă утаманĕпе сыхăнса Пугачов восстанине вăйлăн хутшăннине сăнласа панă. Тутимĕр ролĕнче Л. Семенов артист вылять. Асамат ролĕнче — ЧАССР тава тивĕçлĕ артисчĕ И. Молодов, унăн арăмĕн Куракăн ролĕнче — Е. Шорникова, Эрпике — А. Долгова, Полина — М. Иванова, Таин-Юн, т. ыт. те. Иртнĕ сезонра «Нарспи» пьесăна 24 хут, «Чăжăа» пьесăна 27 хут лартрăмăр, кăна та вĕсенчен кăн мар лартмалла хатĕрленсе хурăмăр, теççĕ артистсем. Режиссерĕ — ЧАССР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ Н. С. Айзман. Пьесăра юрăсем нумай, музыкине Чăваш АССР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ Г. Лисков сырать.

И. М.

2 кашкăр тытнă

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Пăлапуç Пашъелĕнчи «Комсомолец» колхозри хир хуралçи Иван Терентьев 3 кун хушшинче хирте 2 кашкăр тытнă. Кашкăр тытнăшăн ăна укçа парса премиленĕ. И. Терентьев юлташ кашкăр тарăсене боецсем валли ăшă тумтир тума парать.

А. ТУКМАКОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместительĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхăпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—36, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 6540. Горь. Небоксары, типография № 1 Управления полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 490. Ф. б. 58—84 п. л.